• *Аслă ăру çыравçисем*

# Пултаруллисен сумсăр ĕмĕрĕ

Иртнĕ ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче тата каярах та /революципе граждан вăрçи кĕрлесе иртнĕ хыççăн/ Раççей талккăшĕпех ÇĔН ЙĔРКЕЛЕНӲ пуçланса каять. Хурçă саспа çырнă хушусем, парти кăтартăвĕсем ялпа хула пурнăçне тĕпрен çĕнетсе улăштарма ыйтаççĕ. Унта та кунта хĕрӳ чĕлхеллĕ ораторсем хĕвĕшеççĕ. Шăп та лăп çак вăхăта сăнласа параççĕ Сергей Есенинăн "Анне кĕтнĕ çыру" сăввинчи хурлăхлă йĕркесем:

*Шутлани пулмарĕ: вăхăт иртрĕ –*
*вилнĕ ĕмĕте чĕртейĕн-и?*
*Çухату нуши чĕнмесĕр çитрĕ –*
*пуçăмран шăлмарĕ самани.*
*Ан вăрат, анне, кĕлле чĕнсе те!*
*Пулас çук усси. Иртни – килмест.*
*Эсĕ çеç чун-хавалне чĕртетĕн,*
*Маншăн чун çути пĕр эсĕ çеç.*

**/Н.Теветкел куçарнă/.**

Чун хĕлĕхĕпе çакнашкал туйăмпа кĕвĕленĕ сăвă ярăмĕ чăваш литературинче те пайтах пулнă. Н.Шупуççынни, С.Элкер, П.Хусанкай, Митта Ваçлейĕ, А.Алка тата ытти паллă чăваш поэчĕ тăван поэзире хăй евĕр сассипе чылай çамрăк сăвăçа хавхалантарнă. Вĕсен йышĕнче Андрей Петтоки те тивĕçлĕ вырăн йышăнать. Есенинла туйăм та канăç паман:

*Ан кулянсам, савни, ан хурлан,*
*эс йĕрсе çут куçна ан пăссам.*
*Вăхăт урăх, йĕме тивĕç мар,*
*Йывăр шухăш ан пултăр, – пусар.*

Ку сăвăра, паллах, патриот шухăшлавĕ те çиеле тухать.

*Ман юлташ халĕ урăх – пăшал;*
*Сар хĕртен те вăл маншăн паха.*
*Эп ăна сан пекех ачашлап,*
*Хамăн çирĕп аллăмра хыт тытап.*

Идеологин хурçă шăлĕ шатăрт! татса илесрен сыхланса çырнă йĕркесем туллиех пулсан та – Петтоки сăввинче чăваш каччин пăчăртанса тухакан хурлăх куççулĕ çук мар:

*Эп хавас. Маннă эп макăрма.*
*Тантăш илемлĕ, чипер касăрма.*

Анчах "Кĕрхи шухăш" сăвăра поэт сасартăк хăйне канăçсăрлантарса тăракан шухăш-кăмăлне уçса парать:

*Пуç тулли – сапаланчăк шухăш,*
*Ăçта пăхан – кун çути палăрмасть.*
*Пит вăркать, пит çунать яш чух ăш,*
*Никам та çул уççи кăтартмасть.*

Ку сăвва поэт 1920 çулта çырнă. Çак йĕркесене çырма тимĕр саманара çăмăлах пулман.

*Эп юратнă чунтан ирĕк сăвă,*
*поэт ячĕ илĕртнĕ мана.*

Çавăнтах çапла хирĕçлесе хурать:

*Çук, мĕн-ма-ха, ухмах, суе-етĕп?!*
*– Маншăн сăвăç ăраскаллă пулман!*

Совет саманинче çакнашкал йĕркесемшĕн поэта мĕн кĕтнине ун чухне нумайăшĕ ăнланнă. Мана, сăмахран, Петтокин çакнашкал шиксĕрлĕхĕ чăннипех те тĕлĕнтерет паянхи кун. Пурнăç чăннипех те тĕлĕнмелле хăвăртлăхпа улшăнса пынă. Чăннипе илсен, Раççейĕн çак тапхăрне индустриализаци самани тесе хаклама май пур. Уйрăм харпăрлăха пĕтерсе колхоз йĕркеленĕ вăхăт нумайнумай çемьешĕн трагеди пулнă. Кун çинчен нумай çырнă, халĕ те хут пĕтереççĕ. Ирĕксĕрех С.Есенинăн "Тăван çĕршыва таврăнсан" сăввинчи /куçарăвĕ манăн/ çакнашкал йĕркесене илсе кăтартас килет. Ку сăвăран икĕ шухăш-туйăмăн хирĕçлевĕ сиксе тухать:

*"Тултартăм тăхăр вуннă. Тен, çитет?*
*Эс – вăтăрта. Çапла-и? Эп... каясшăн.*
*Шăм-шакăм тупăкра шăкăртатасшăн", –*
*тет ватă çын. Çамка тирне пĕрет.*
*– Эх, самана-а!.. Эс коммунист-и?*
*– Мар!*
*– Йăмăкусем комсомола иленнĕ.*
*Эх, намăс! Халь килтен тухса çеç тар!*
*Ĕнер турăшсене те тухнă-пенĕ...*

Сергей Есенина ял çулĕ çинче тĕл пулнă мучин тĕпленсе ларнă пурнăç ăнланăвне Çĕнĕ йĕркелӳ хумĕсем пыра-пыра çапни куç кĕрет паллă кунта.

*Чиркӳ – хĕрессĕр. Комиссар антарчĕ.*
*Ăçта-ши халь Турра ман пуç çапас.*
*Тен, вăрмана çеç вăрттăн йăпшăнас?*
*Ăвăссене пулин те пуç çапасчĕ.*
*Тен, кирлĕ пуль? Атя, утар киле!*

Ялти улшăнусем вырăс поэтне йăлтах тĕлĕнтерсе яраççĕ:

*Тĕнче касса çӳренĕ май ăнлантăм:*
*Эп Ленинран та сăрлас çук икун.*
*Хам кил-йыша эппин пуçа таям та*
*тенкел çинче пăхса ларам ун-кун.*

Акă ăçта вăл хресчен харпăрлăхне çапса хуçакан вăхăт тапхăрĕн шелсĕр сăн-сăпачĕ. Кунашкал шухăшпа Петĕр Хусанкай та, Митта Ваçлейĕ те нумай-нумай сăввинче çĕнĕ тавра курăм шыранă. Унашкал пăшăрхануллă йĕркесем Çемен Элкерĕн те çук мар. Андрей Петтоки вара, çакнашкал хирĕçӳллĕ шухăш-кăмăл тапхăрĕнче сасă илнĕ çамрăк чăваш поэчĕ, çĕнĕ самана çыннин тивĕçне те манса каймасть. Хăшĕ-пĕри кунашкал йĕркесене паянхи саманара пĕтĕмпех сивлесе тăкмалла. Анчах шелсĕр вăхăт тапхăрне кирек кам та пăхăннă, унăн вăйне мухтанă, шухăш чĕрĕлĕхне сыхланă:

*Ху ывăннă-и, лашу-и, –*
*Канма вăхăт мар.*
*– Кам унта?! Буржуй-и? –*
*Айта, хăвалар!..*

Çĕнĕ самана таппи Константин Ивановăн "Нарспи" поэмин виçинчен пăрса ярса çĕнĕ виçесем, састашсем шыраттарнă.

*Днепр шыв-и, Дон-и,*
*- Чарайтмаç, каçатпăр!*
*Пирĕн пуç Буденный, –*
*Хыççăн харăс каятпăр...*

Çакнашкал йĕркесем /вĕсене эпĕ Андрей Петтоки 1928–1930 çулсенче çырса хăварнă "Çирĕм иккĕ" поэмăран илтĕм/ хаяр та курăмлă. Вăхăт чăваш поэтикине епле улăштарма пултарни çинчен евитлеççĕ. Ку каялла чакни мар, тăван сăмахшăн, унăн литературишĕн ӳсĕмлĕ малашлăха пиллесе хăварнă никĕс.

Коммунизм вăхăчĕ чăваш поэчĕсене çĕнĕ састашсем урлă Раççейĕн вут-çулăмлă тапхăрĕсене анлăн кăтартса пама хистет.

*Аçа та çапаймĕ,*
*çиçĕм тивес çук –*
*Пирĕнпе Чапаев*
*Командир пур чух.*
*Пирĕнпе – Буденный,*
*Ворошилов Клим.*
*Днепр-и е Дон-и,*
*Е Кавказ, е Крым –*
*Çта тăшман пытаннă,*
*Çта вăй пуçтарать –*
*Пирĕнпе Буденный*
*Тăвăл тустарать.*

*1932*

Çакнашкал çивĕч састашлă плакатсемсĕр идеологин шанчăклă сăвăçи пулма йывăр тивнĕ. Ку В.Маяковскин "Рост чӳречинчен" пăхса сăвă чĕлхипе çырнă плакачĕсенченех килнĕ курăнать. А.Блок та, С.Есенин та, С.Городецкий те чăваш сăвăçисемшĕн хавхалану тĕслĕхĕ пулни çинчен калаçмăпăр.

Чăваш литературинче çамрăк ăру паха тĕслĕхсем кăтартнă пулин те идеологи хуралĕ йĕрлесех тăнă иккен. Акă В.Долгов тишкерӳçĕ "Красная Чувашия" хаçатра пичетленĕ статьян юлашки йĕркисем: "Петтоки совет писателĕсен ретĕнче тăма тивĕçлĕ мар". Мĕн тĕрлĕ суя аргументпа айăпласа пĕтермен пуль автора идеологин шанчăклă хуралçи. Андрей Петтоки вăрçăра вилет, Митта Ваçлейĕ вара 17 çул Сталин тĕрминче чул шутлать. Çапла çаврăнса тухнă пултаруллă сăвăçсен шăпи. Идеологи йăнăшĕпе мар, кĕвĕçӳпе тата ăмсанупа шăл хăйракансем хуптарни çинчен Митта Ваçлейĕ кун кĕнекинче те çырса хăварнă.

**Николай ТЕВЕТКЕЛ.**

## Андрей Петтоки сăввисем

### Кĕрхи шухăшсем

Пуç тулли – сапаланчăк шухăш,
Ăçта пăхан – кун çути палăрмасть.
Пит вăркать, пит çунать яш чух ăш,
Никам та çул уççи кăтартмасть.

Вĕлтĕртетрĕ кĕрхи сарă çулçă,
Вĕлтĕртетрĕ те ӳкрĕ çĕре.
Манран пурнăç темме хытă кулчĕ..
...Çухалс/а/ юлнă телей инçетрех...

Çамрăк пуç ытлашши йăваш пулнă,
Пит юратнă тĕнчен илемне.
Çут тĕнче илемпе миме тулнă,
Юр юрланă ялан çуркунне.

Эп юратнă чунтан ирĕк сăвă,
Поэт ячĕ илĕртнĕ мана.
Чунăм та ун чухне пулнă сывă,
Ĕмĕтпе хуçăлман çамрăклах...

Генрих Гейне хăват мана пӳрчĕ,
Пушкин сăвăç пиллерĕ пуçа.
Çеçпĕл чунĕ манра та вĕт пурччĕ!
Сăвăç çулĕ ман пулнă уçах.

Çук, мĕн-ма-ха, ухмах, суеçетĕп?!
– Маншăн сăвăç ăраскаллă пулман!
Вĕт хамах та пит лайăх пĕлетĕп:
Эп поэзие çывăх курман!..

...Каçхине шурăм пуç пĕлĕт çийĕн
Хĕвел хыççăн анса пытансан,
Ушкăн-ушкăн тухаççĕ ретшерĕн
Ылтăн хĕм çăлтăрсем катаран.

– Çук! Çавах çухалман-ха ман ĕмĕт!
Маншăн та кун çути ялтăркка!
Пуçăмра ман поэзийĕн хĕмĕ
Ĕмĕр çунĕ сӳнми çулăмпа!

Эпĕ те, тен, чăваш тăван çĕршĕн
Тăван сăвăç пулайăп, чăнах?
Ян! янратĕ ун чух чĕлхем–вĕршĕн,
Чăваш хĕрĕ ăна итлĕ тăрсах...

Вĕлтĕртетрĕ кĕрхи сарă çулçă,
Вĕлтĕртетрĕ те ӳкрĕ çĕре.
Мана хирĕç пăхса хĕвел кулчĕ,
Хастарланчĕ чĕр юнлă чĕре.

1929.

### Хĕвел тухăç шуçăмланчĕ

**Романс**

Кĕрен тĕсĕн хĕвел тухăç шуçăмланчĕ,
Ешĕл улăх сывлăшпа шăрçаланчĕ...
Айлăм çийĕн тĕтре сарăлать,
Шупка уйăх ире парăнать.

Вăрансамччĕ, савни, савнă тусăм!
Шуçăм ӳкрĕ хире тахçанах.
Ешĕл симĕс хирти хура пусă
Ыталасшăн-илесшĕн сана.

Шуçăм кайăкĕ – сар шăпчăк шăпланчĕ.
Хĕвел тухăç чăнкăр шуçăн вутланчĕ.
Ял хушшийĕ – сисетни ăна? –
Çĕнĕ кун вăйĕпе вăранать.

Шурă çĕмĕрт айĕнчех çур çĕр иртрĕ.
Çума-çумăн ларсах ир те çитрĕ...
Вăрансамччĕ, тăрсамччĕ, савни,
Килес кунăн ĕçне мантăн-и?

Сана вăхăт сар хире ав тухмашкăн,
Вăхăт трактор çийĕнче ярăнмашкăн.
Çурхи кун хăть шăрăх, хăть уяр –
Санăн трактор янратĕ уя.

Каçхи шуçăм сӳниччен уйра çӳрĕн:
Эс сухалăн хире, акса сӳрĕн.
Уйăх çутийĕн таврăнăн яла
Мотор шавлă тракторупала.

Хирĕç тухăп, сана кĕтсе илĕп.
Каçхине сарă уйăх пире пиллĕ,
Шурă çĕмĕрт ачашлĕ пире.
Каллех тăратăп ыран та ирех.

Вăрансамччĕ, савни, савнă тусăм!
Шуçăм ӳкрĕ хире тахçанах.
Ешĕл симĕс хирти хура пусă
Ыталасшăн-илесшĕн сана.

1932.